

Yandex.ru сайтран.

# ЯЛТИ БИЗНЕС

сайт: putpobedy.ru

Проект авторĕ – Елена Порфирьева.

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

## Çулла канма вăхăт çук...



Пылак çимĕç илĕртет.

**Çапла калаççĕ çĕр ĕçченĕсем – çырла çитĕнтерекенсем. Яваплă тапхăрта хушма тупăш ытларах илес текенсем ырми-канми тăрăшаççĕ. Çырла вăйлă тухăç патăр тесе ятарлă технологие пăхăнаççĕ.**

Вăрнарти «Шанс» пасар кĕçнерникун кĕрлет, шавлать. Уйрăмах çынсем çырла сутакансем патĕнчен татăлма пĕлмеççĕ. Чылайăшĕ витаминсемпе, микроэлементсемпе пуян çимĕçе илме васкать, хĕл хырăмĕ аслă пулнине аванах ăнкарать, варени-компот та тăвать, шăнтма та хурать.



Çĕр çырли – панулми пек.

«Мамочка», «Дивная», «Мальвина», «Холидей», «Ароза», «Виктория», «Азия» тата ытти сортлă çĕр çырлисене халăх хапăлласах туянать. Пылак та сĕтеклĕ çимĕçе Аçăмçырминчен, Мăньял Хапăсран, Кăкшăмран, ытти ялтан сутма çитнĕ. Витресем, контейнерсем хăвăртах пушанаççĕ. Туянакансем пĕр килограмшăн 250–300 тенкĕ тӳлеççĕ. «Енчĕк пĕчĕк, вырăн çук», – шӳтлерĕ 50 çула çывхаракан хĕрарăм укçа-тенке шутланă май.

Акă, пĕр çӳллĕ арçын Муркаш районĕнченех килнĕ. Ятне-шывне пĕлтермерĕ, анчах та унăн таварне хаклакансем нумаййăн пулчĕç.

– Ытла та шултра, сорчĕ мĕнле? Мĕнле çитĕнтеретĕр, каласа кăтартăр-ха, тархасшăн? – ыйтрĕç умлăн-хыçлăн пĕри те тепри.

Муркашри хресчен хуçалăхĕн ертӳçин çемйи çĕр çырлине пĕр гектар çинче çитĕнтерет. «Азия» сорт валли пысăк лаптăк уйăрнă. Çырли панулми пысăкăш, пĕри 70–80 грамм таять. Тăрăшнине кура нухрачĕ. Ӳркенмесен яллă тăрăхра та предпринимательлĕхĕн тĕрлĕ енĕсене тухăçлă аталантарма пулать. Палăртмалла, Шупашкарти Элкер урамĕнчи фермер пасарĕнче те Муркаш хастарĕ продукци сутать. Павильонсенче вăрнарсен çырлине те курнине çирĕплетрĕ. Каласа хăвармалла, тĕнчере çĕр çырлин 20 пин ытла сорчĕ шутланать. Апла пулин те пурте пахалăхлă.

Иртнĕ çул çырла туса илессипе тăрăшакансене республика бюджетĕнчен пулăшма йышăннă. ЧР Ял хуçалăх министерствинчен çапла çирĕплетеççĕ: пĕр гектарти тырпул 60 пин тенкĕ, çав лаптăкранах туса илнĕ çырла вара 10 миллион тенкĕ тупăш кӳрет иккен. Паллах, правуррисем ытти ĕçре хăйсен хастарлăхне кăтартма пултараççĕ. Пуçаруллă утăм тăвакансен, харпăр хăйĕн ĕçне кӳлĕнекенсен йышĕ çултан-çул ӳссе пырать. Чи маттуррисем социаллă предпринимательлĕх енĕпе гранта тивĕçеççĕ. Патшалăх пулăшăвĕ малалла ĕçлеме хавхалантарать.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

## Чăхxи-чĕппи, самăр кăвакал...

**Ялтан яла пырса кĕрсен урамсем хур-кăвакал, чăх-чĕп сассисемпе тулнине тӳрех асăрхатăн. Хапăссем те ентешĕсенчен юлмаççĕ. Ытлă-çитлĕ пурăнас тесе выльăх-чĕрлĕхне те, кайăк-кĕшĕкне те йышлă усраççĕ. Ытлашши сĕтне, аш-пăшне тупăшлă вырнаçтарма та май тупаççĕ, туянакансене экологи тĕлĕшĕнчен паха продукципе тивĕçтереççĕ.**

Татьяна Змеева Вăрнарти аш-какай комбинатĕнче тăрăшать. Кил хуçалăхĕ те çирĕп. Ашлăх ӳстерекен шултра чăх чĕпписем нумай тытать. «Çу каррине çитетпĕр. Бройлерсем самай çитĕнчĕç, – тет Татьяна Геннадьевна. – Хĕрĕм Даша чĕпсене вăхăтра апат çитерет, хам ерçмесен тăвансем те пулăшаççĕ».

Татьяна Змееван хуçалăхĕнче кăвакал та картиш тулли. Маттурскерне пĕчĕкренех «куршанак» çыпăçнă, вăл ачаранах ĕçе кӳлĕнсе ӳснĕ. Хапăсри вăтам шкул хыççăн Канашри педколледжран вĕренсе тухнă. Çемье çавăрса тăван ялĕнчех тĕпленнĕ, чул çурт çĕкленĕ. «Ял çыннин тулăх пурăнма майсем çителĕклĕ. Чи кирли наян пулмалла мар», – палăртрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.

Районĕпе илсен, мĕнпур тытăмри хуçалăхсенче кайăк-кĕшĕк 26,9 пин пуç тытаççĕ, çав шутра 23,4 пинĕшĕ – хушма хуçалăхсенче. Хулăм укçа шыраса яшсемпе хĕрсем час-часах хуланалла туртăнаççĕ. Ялта бизнеса аталантарни ĕçлĕ пулма пулăшать. Кĕркуннепе хĕлле пасарта кайăк-кĕшĕк аш-пăшне тата выльăх-чĕрлĕх продукцине сутакансене час-часах курма пулать.

Татьяна Змеева «Фермер шкулĕ» проекта пурнăçлама хутшăнакансемпе мăнаçланнине пĕлтерчĕ. Ĕмĕтĕн вĕçĕ-хĕрри çук, теççĕ. Тен, маттур çамрăкăн та пуçаруллă утăм тума çирĕп шухăш çуралĕ.

**Елена ТОЛСТОВА.**



Т.Змеева – сылтăмри.

## Усламçăсемшĕн аван

**Хăй вăхăтĕнче Вăрнарти Сельхозтехника колхозсен гусеницăллă тракторĕсене, тырă вырмалли комбайнĕсене, водоснабжени, навус кăларакан, ĕне сумалли оборудованине йĕркеллĕ ĕçлеттерес тесе тăрăшнă.**

Кунта çав тери вăйлă специалистсем тимлетчĕç: Г.Васильев, В.Мальков, А.Иванов токарьсем, В.Николаев фрезеровщик тата ыттисем те. Ятарлă мехмастерской пулнă. Станокĕсем те вăйлăччĕ. Управляющийĕ А.Ивановччĕ, тĕп инженерĕ – Л.Новиков.

Совет Союзĕ аркансан колхоз-совхозсем те нумайăшĕ пĕтрĕç. Сельхозтехника та арканчĕ. Ĕççĕр юлнă специалистсенчен чылайăшĕ Вăрнарти аш-какай комбинатне, хăйминчен уйăрнă типĕтнĕ сĕт заводне, Вăрнарти хутăш препаратсен заводне вырнаçрĕç.

Юрать, Сельхозтехникăн пушаннă çурчĕсене юхăнма памарĕç. В.Михайлов унччченхи мастерскойсен вырăнĕнче «Шанс» организацие йĕркелерĕ. Çапла уйрăм предпринимательсем те хăйсен ĕçне аталантарма пултарчĕç.

Ку территори халĕ анлăшĕпех ĕçлет. Предпринимательсем тăрăшнипе халăха куллен тĕрлĕ таварпа тивĕçтереççĕ. Ахаль çынсен те харпăр хăй тупăшĕшĕн тăрăшма май пур. Вĕсем пахча-çимĕç, калча, ытти япала сутма пултараççĕ.

**В.СМИРНОВ.**
Упнер.

## Ĕç ӳркевлĕхрен хăтарать, тĕрĕс çул кăтартать

**Юлашки çулсенче ялсенче пурăнакансенчен чылайăшĕ шултра выльăх йышне чакарчĕç. Çакна ытларахăшĕ ĕне тытасси тухăççăр ĕç тесе ăнлантарать. Анчах та пăхатăн та – тулли вителлисем паянхи кун начар мар аталанаççĕ. Вĕсем кил хуçалăхне те çирĕплетеççĕ, ытлă-çитлĕ те пурăнаççĕ.**



В.Керзаков.

– Хушма хуçалăха аталантарни çемье тупăшне ӳстерме кăна мар, çын пурнăçне дисциплина енчен йĕркелеме те пулăшать, – тет, акă, Хăмăшра пурăнакан Василий Керзаков.

Вăл, тĕпрен илсен, кил-çуртĕнче пĕчченех тĕрмешет пулин те выльăх йышне чакарасшăн мар-ха. Икĕ ĕнине, чупнă пăрăвне, лашипе икĕ вăкăрне, сыснине ачана пăхнă пекех пăхать.

Витесем тулли чухне, паллах, пушă вăхăт сахалрах. Кунĕ выльăхпа ĕçлесех иртсе каять тесен те йăнăш мар. Уйрăмах çуллахи вăхăтра ял çыннин канăçĕ çухалать, вăл кашни кунпа тухăçлă усă курма тăрăшать.

Василий Юрьевич та, акă, çу кунĕсенче хĕвелтен те иртерех тăрать. Утă хатĕрленĕ вăхăтра вара ларса канмасть тесен те йăнăш пулмĕ. Пахалăхлă апат пахалăхлă сĕт пулнине вăл аван пĕлет. Çавăнпа та сĕтеклĕ курăка ытларах типĕтсе юлма тăрăшать.

Маттур арçын ӳркевлĕх мĕнне пĕлмест. Ĕнисене те вăл хăех, алăпах, сăвать. Сĕтне патшалăха сутса тупăш илет. Василий Юрьевич шучĕпе, ялта тĕпленсе пурăнакан вăйпитти çынсем паянхи кун шăпах çак мелпе çемье нухратне пуянлатма пултараççĕ. Харпăр хăй çине ĕçлени пысăк тупăш парать. Çитменнине, халĕ патшалăх та хăйĕн бизнесне аталантаракансене тĕрлĕ пулăшусемпе тивĕçтерет.

Василий Керзаков – шалти ĕççен службин ветеранĕ. Хăмăшрах çуралса ӳснĕ. Çар хыççăн ултă çул районти милици уйрăмĕнче ĕçленĕ. Хыççăн – Шупашкарта, Çĕпĕрте. Амăшĕ пурнăçран уйрăлсан тăван киле сӳнме парас темен, çуралнă яла таврăннă. Маларахри çулсенче çамрăксемпе пĕрле тĕрлĕ регионсене стройкăсене тухса çӳренĕ. Халĕ темиçе çул ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе тимлет.

Пилĕк пĕртăванĕ те ăна пулăшма васкаççĕ. Çемьере вара вĕсем çиччĕн ӳснĕ. Хĕрĕсем, аякра пурăннăран, час-часах килсе çӳреймеççĕ, анчах та тăван ашшĕне манмаççĕ, телефонпа тăтăшах çыхăнаççĕ.

Арçынна пĕччен çавăн чухлĕ выльăх тытма йывăр мар-и тесен, Василий Юрьевич сăпайлăн: «Пурнăç – хускану-ра», – терĕ. Çавăн пекех вăл ирĕклĕ пурнăç сиенлĕ йăласемпе те часах туслаштарма пултарнине палăртрĕ.

Чăнах та, ĕç пурнăçа тытать. Ĕне-выльăх усрани вара çемье енчĕкне кăна мар, сĕтеле те пуянлатать, сывлăха та çирĕплетет...

**Светлана ЧИКМЯКОВА.**